27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 27 ЫТЛАРИКУН 126(6621) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ЗАХАРОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем МСТИСЛАВЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре ПРОНЯ шывĕ урлă каçнă та, артиллерипе авиаци хăватлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, нимĕçсен Могилев патне пымалли вырăна хÿтĕлесе тăракан вăйлă çирĕплетнĕ оборонине 45 километр сарлакĕш участокра татнă, виçĕ кун хушшинчи наступленире 30 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 75 километр таран сарнă.

Çак наступленире фронт çарĕсем Могилев облаçĕн район центрне — ЧАУСЫ хулине — туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла ирĕке кăларнă. Вăл шутра — ЧЕРНЕВКА, ЖДАНОВИЧИ, ХОНЬКОВИЧИ, БУДИНО, ВАСЬКОВИЧИ, ТЕМРИВИЧИ тата БОРДИНИЧИ.

ПРОНЯ шывĕ урлă каçассишĕн тата нимĕçсен оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче ГРИШИН генерал-лейтенантăн, БОЛДИН генерал-лейтенантăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, ГАСПАРЯН генерал-майорăн, КОНОНЕНКО генерал-майорăн, СКРЫЛЕВ генерал-майорăн, КИРИЛЛОВ генерал-майорăн, ЛАЗАРЕНКО генерал-майорăн, КРАСНОШТАНОВ генерал-майорăн, ЮРИН полковникăн, СЛИЦ полковникăн, АРТЕМЬЕВ полковникăн, ШТЕЙГЕР полковникăн, ГУСЕВ полковникăн, НЕСТЕРОВ майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн ДЕГТЯРЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн РАЗИНЦЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПАРЕШИНĂН, ЕРШОВ полковникăн, СОКОЛЕНКО полковникăн, КОРОЛЕВ полковникăн, МИХНО полковникăн, ЗЯБЛИКОВ полковникăн, АХТЫРЧЕНКО подполковникăн, КАРАСЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; КОТОВ полковникăн, ЛУКАШОВ полковникăн, ТУЛОВСКИЙ полковникăн, МАЗИКИН подполковникăн, КОРОЛЕВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ГЕОРГИЕВĂН, ГЕТМАН полковникăн, СМОЛОВИК полковникăн, ВУСС полковникăн, БЛИНОВ полковникăн, КОЗАЧЕНКО полковникăн, ПОКАЕВА подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн БЛАГОСЛАВОВĂН, САВЕЛОВ полковникăн, ВИЗИРОВ полковникăн, ДЕРГУНОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, СМЫШЛЯЕВ майорăн, ПЕТРОВ майорăн, КАНАРЧИК майорăн, ЩЕТИННИКОВ майорăн саперĕсем тата çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн НАЗАРЧУКĂН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 25-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПРОНЯ шывĕ урлă каçнăскерсене тата нимĕçсен МОГИЛЕВ енчи оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ПРОНЯ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшман оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 25-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА
Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн тата БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн çарĕсем, флангсенчен инçене туххса тăшмана çавăрса илсе, Витебск патĕнче нимĕçсен пилĕк пехотнăй дивизирен тăракан группировкине çавăрса илнĕ. Çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, пирĕн çарсем паян, июнĕн 26-мĕшĕнче, Белоруссин пысăк область центрне, нимĕçсен хĕвеланăç енчи оборонин стратеги тĕлĕшĕнчен паха узелĕ пулса тăракан ВИТЕБСК хулине штурмласа туртса илнĕ.

ВИТЕБСК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче БЕЛОБОРОДОВ генерал-лейтенантăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, ЛОПАТИН генерал-лейтенантăн, ЛЮХТИКОВ генерал-майорăн, ИБЯНСКИЙ генерал-майорăн, ПРОКОФЬЕВ генерал-майорăн, БЕЗУГЛЫЙ генерал-майорăн. ДИБРОВ генерал-майорăн, УСАЧЕВ генерал-майорăн, КВАШНИН генерал-майорăн, ВОЛЬХИН генерал-майорăн, ЛУЦКЕВИЧ полковникăн, БАЙДАК полковникăн, САВЧЕНКО полковникăн, ГОНЧАРОВ полковникăн, СИНИЦИН полковникăн, ЖГУТОВ подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БАРСУКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЩЕГЛОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЕРЕШĂН, ЛУКЬЯНОВ полковникăн, КУЛЬКОВ полковникăн, ИЛЬИЧЕВ подполковникăн, ПРУСАКОВ подполковникăн, ЛАВРИНОВИЧ подполковникăн, КИЯН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн РОДИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВĂН, КОВАЛЕВ полковникăн, ЗАЙЦЕВ майорăн, КУНИН майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн МОЛОКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЛАГОВЕЩЕНСКИН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВĂН, БОЛОТОВ подполковникăн, ШКУЛЕПОВ подполковникăн, НЕСТОЯНОВ подполковникăн, ВЫСОКОВ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГНЕДОВСКИН, ГОРОДКОВ полковникăн, ЧИЖ подполковникăн саперĕсем тата çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БАБКИНĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СОРОКИНĂН, РОДИОНОВ полковникăн, АГЕЕВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВИТЕБСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ВИТЕБСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 26-мĕшĕнче, 22 сехетре Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн тата БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ВИТЕБСК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ВИТЕБСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районран наступлени пуçласа ярса, авиаципе артиллери йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, нимĕçсен Бобруйск патне пымалли вырăна хÿтĕлесе тăракан вăйлă çирĕплетнĕ оборонине 35 километр сарлакĕш участокра татнă, икĕ кун хушши çапăçса наступлени туса пырса 30 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 80 километра çити сарнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, РОГАЧЕВ хулинчен çурçĕтерехре Друть шывĕ урлă каçнă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ, шалалла инçе кĕрсе каякан оборонине 30 километр сарлакĕш фронтра татнă, 12 километр таран малалла кайнă.

Çак наступленире фронт çарĕсем халăх пурăнакан 100 пункта ытла, вăл шутра — РЕКТА, ОЗЕРАНЕ, ВЕРИЧЕВ, ЗАПОЛЬЕ, ЗАБОЛОТЬЕ, КНЫШЕВИЧИ, МОИСЕЕВКА, МУШИЧИ пункчĕсене туртса илнĕ тата БОБРУЙСК хулипе ЛУНИНЕЦ хули хушшинчи чугун çула МОШНА, ЧЕРНЫЕ БРОДЫ станцийĕсен районĕнче татнă.

Нимĕçсен оборонине татнă чухнехи çапăçусенче БАТОВ генерал-лейтенантăн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРБАТОВ генерал-лейтенантăн, РОМАНЕНКО генерал-лейтенантăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорăн, ПЕРХОВИЧ генерал-майорăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн, БАТИЦКИЙ генерал-майорăн, РАГУЛЬ генерал-майорăн, ЖОЛУДЕВ генерал-майорăн, КОЛГАНОВ генерал-лейтенантăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, САНКОВСКИЙ генерал-майорăн, МОРОЗОВ полковникăн, ГРЕБЕННИК генерал-майорăн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорăн, БОРИСОВ генерал-майорăн, ДАНИЛОВ генерал-майорăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорăн, СЫЧЕВ полковникăн, КУЗИН полковникăн, МИХАЛИЦИН полковникăн, РЕВУНЕНКОВ генерал-майорăн, МОХИН генерал-майорăн, КАЗАКЕВИЧ генерал-майорăн, ЦЫПЛЕНКОВ полковникăн, ПОГРЕБНЯК полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БЕСКИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ТИМОТИЕВИЧĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, артиллери генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН, АКИМУШКИН полковникăн, ЖИГАРЕВ полковникăн, ИВАНОВ майорăн, БЕСПАЛЬКО подполковникăн, ЕРЕМЕЕВ полковникăн, ОСТРЕЙКО полковникăн, ГОНЧАРУК подполковникăн, ОЛЕЙНИК полковникăн, ВОСКРЕСЕНСКИЙ полковникăн, ОНУФРИЕВ полковникăн, ЗРАЖЕВСКИЙ полковникăн, ТРАВКИН полковникăн, ПОДОЛЬСКИЙ полковникăн, УШАКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАНОВĂН, ВЕРЛАНЬ подполковникăн, ГАВРИЛОВ подполковникăн, СОКОЛОВ подполковникăн, ТИДЕМАН подполковникăн, РЫЖАНОВ подполковникăн, МАКАРКИН подполковникăн, НОВАК полковникăн, КРАПИВА майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ОСИПЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТУПИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорĕн БАЙДУКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КАРАВАТСКИН, авиаци генерал-майорĕн ВОЛКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн МЕНЬШИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн СЧЕТЧИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ЮХАНОВĂН, ЧИРВА полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, ШЕРСТЮК подполковникăн, ИВАНОВ полковникăн, СУХОРЯБОВ полковникăн, БОРИСЕНКО полковникăн, РАССКАЗОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ПРОШЛЯКОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ШВЫЦКОЙĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЖИРОВĂН, ГАБЕР полковникăн, ЯКОВЛЕВ полковникăн, ПЕТРОВ полковникăн, АРЦЫШЕВСКИЙ полковникăн, КОРОЛЕВ майорăн, ЛУКАЧЕВ капитанăн, КОЗЛОВ майорăн, СБОРОВСКИЙ подполковникăн, СНАДИН капитанăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн МИШИНĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн МАМОТКĂН, БОРИСОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 25-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутăра хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен Бобруйск енчи оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн тата Друть шывĕ урлă каçассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 25-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, паян, июнĕн 26-мĕшĕнче, Бобруйск енче нимĕçсен оборонин паха опорнăй пункчĕ пулса тăракан ЖЛОБИН хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ.

ЖЛОБИН хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче РОМАНЕНКО генерал-лейтенантăн, ПИЧУГИН генерал-майорăн, ПЕТРОВСКИЙ полковникăн, МАССОНОВ полковникăн, çарĕсем; ТРАВКИН полковникăн, БУБЛИКОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; ГРИШЕНКО подполковникăн летчикĕсем тата МАСИК подполковникăн понтонерĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЖЛОБИН хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ЖЛОБИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 26-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ЖЛОБИН хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ЖЛОБИН хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

И. В. Сталин юлташа „Мускава хӳтĕленĕшĕн“ ятлă медаль пани

Июнĕн 20-мĕшĕнче, Кремльте Ĕçсынни депутачĕсен Мускав хули Совечĕн Исполкомĕн Председателĕ В. П. Пронин юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателне, Верховный Главнокомандующие, Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа, Мускава паттăррăн хӳтĕлес ĕçе ертсе пынăскере тата Мускав патĕнче нимĕç çарĕсене аркатса тăкас ĕçе организацилениĕскере, «Мускава хӳтĕленĕшĕн» ятлă пĕрремĕш медаль панă.

Танксемпе самолетсем тума

ИШЛЕЙ. «Красный пахарь» колхоз колхозникĕсем Хĕрлĕ Çар валли пĕр боевой самолет илмелĕх укçа пухаççĕ. Колхоз председателĕ А. Лебедев юлташ 5.000 тенкĕ, бригадирĕсем К. Мушляев, В. Кириллова, А. Мясников, А. Романов юлташсем тата ферма заведующийĕ А. Ванькин юлташ кашниех 3.000-шер тенкĕ панă.

Тăрăнти «Çĕнĕ пурнăç» колхозра укçа пухасси активлăн иртет. Колхоз председателĕ М. Васильев 10.000 тенкĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Л. Степанов 5.000 тенкĕ, ватă колхозник Л. Павлов 1.000 тенкĕ, колхозница Михайлова 2.000 тенкĕ панă. Евдокия Михайлова юлташ колхозри митингра çапла каланă:

— Манăн икĕ ывăл ирсĕр тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Эпĕ вĕсене ĕçпе те, укçа-тенкĕпе те пулăшма тăрăшатăп. Эпĕ Хĕрлĕ Çар валли боевой техника тума 2.000 тенкĕ паратăп. Манăн укçа фашистсене вилĕм кӳме пулăштăр, — тенĕ.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

РСФСР Верховный Совечĕн суйлавне тепĕр срока хăварасси çинчен

РСФСР Верховный Совечĕн суйлавне 1945 çулхи июнь уйăхĕччен хăварас, РСФСР-ăн пĕрремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене çав срокăхă тăсас.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем Онега кӳллин чен çурçĕртерехре, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, Карел-Финн ССР-ĕнчи пысăк район центрне — МЕДВЕЖЬЕГОРСК хулине — тытса илнĕ.

Çав фронт çарĕсемех, ЛОДЕЙНОЕ ПОЛЕ хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пырса, ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳллине çитиччекех Свирь шывĕ урлă каçса кайнă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, виçĕ кун хушши çапăçса, 20 километртан пуçласа 30 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра — МИХАЙЛОВСКОЕ, МЕГРОЗЕРО, ПЕЧНАЯ СЕЛЬГА, БЕРЕЖНАЯ, МИКЕНТЬЕВА ятлă ялсем.

ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 20 километртан пуçласа 40 километра çити малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна 80 километр таран сарнă. Июнĕн 24-мĕшĕнче фронтăн çав участокĕнче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 200 пункта ытла ирĕке кăларнă, çав шутра — ХОДОРОВКА, ДОЛГАЯ НИВА, ПРЫГУНОВА, МЯСОЕДОВО, ЗАЛЕСЬЕ, ЗАГОРЬЕ, МИШКОВИЧИ, БАРАНОВСКИЕ, ВИШНЕВКА, КУТИНО, АНДРОСОВИЧИ, ДУБРОВСКОЕ, УЖЛЯТИНА ятлă ялсем тата ЛОВША чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем 35 километр тăршшĕ фронтра ХĔВЕЛАНĂÇ ДВИНА шывĕ патне пырса тухнă.

ВИТЕБСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, икĕ кун хушшинче 25 километра çити малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна 85 километр таран сарнă. Июнĕн 24-мĕшĕнче фронтăн çав участокĕнче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 150 пункта ытла ирĕке кăларнă, çав шутра — РОГИ, ЗАОЗЕРЬЕ (ВИТЕБСК хулинчен 8 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре), ХАМИЩЕВО, ПЛИССЫ, ЗАМОЩЕНЬЕ, ЗАДОРОЖЬЕ, ВЕРХНЕЕ АЛЕКСАНДРОВО, НИЖНЕЕ АЛЕКСАНДРОВО, ФИЛЕВО, СКОГ, ВЕРХНЯЯ ГРЯДА, НИЖНЯЯ ГРЯДА, ЛУЧЕСА, БОЛЬШАЯ ЩИТОВКА, РЫЖИКИ ятлă пысăк ялсем тата СОСНОВКА, ЛУЧКОВСКОЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ОРША енче пирĕн çарсем, наступлени пуçласа ярса, БАБИНОВИЧИ хулинчен кăнтăртарахра 20 километр тăршшĕ фронтра тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, нимĕçсем хытă хирĕç тăнине сирсе ярса, 15 километр таран малалла куçнă. Пирĕн çарсем халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра — ОЗЕРИЩЕ, ВЕРЕТЕЯ, ОСТРОВ ЮРЬЕВ, ШИБАНЫ, СТАРИНА, ЗАМОЩЬЕ, СТАРЫЕ ХОЛМЫ, ЗАБЕЖНИЦА ятлă пысăк ялсем.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем, наступлени пуçласа ярса, ПРОНЯ шывĕ урлă каçнă та ЧАУСЫ хулинчен çурçĕртерехре тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, 20 километр таран малалла куçнă, татса кĕнĕ вырăна 50 километр таран сарнă. Пирĕн çарсем халăх пурăнакан 70 пункта ытла ирĕке кăларнă, çав шутра — СТАРЫЙ ПРИБУЖ, ВОЛОВИЧИ, ЗАЛОЖЬЕ, БУДИНО, РАДУЧИ, БОЛЬШОЕ ЩЕКОТОВО, СЛОБОДКА, ШЕСТАКИ, ЖАКОВКА, ЧЕРНЕВКА, КОРОВЧИНО, ХОНКОВИЧИ, ПОПОВКА, РАЗИНКА, ЧЕРНАВЦЫ, БЕЛИВИЦА ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июнĕн 23-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 54 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ИЮНĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 25-мĕшĕнче ВИТЕБСК хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, ХĔВЕЛАНĂÇ ДВИНА шывĕ урлă 30 километр сарлакĕш участокра каçса кайнă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПОДОРЫ, КОМАЧИНО, НАДЕЖИНО, ПОРЕЧЬЕ, ПЯТИГОРСК, СЕНЬКОВЩИНА, ВОРОХОБКА, КОРОВИНО, ШАРЫЛИНО, НОВЫЕ СОКНАКИ, ВЯЖИЩЕ, ЗАДОРОЖЬЕ, ТЕРЕБЕТОВКА, СТАРОЕ СЕЛО, КОВАЛЬКИ, ВАСЬКОВИЧИ ятлă ялсем тата СТАРОЕ

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

ÇУЛЙĔРСЕНЕ ЛАЙĂХ ПĂХСА УСРАР

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, июнĕн 20-мĕшĕпе июлĕн 20-мĕшĕ хушшинче çулйĕр уйăхлăхĕ иртет. Çак тапхăрта çулйĕрсем тумалли тата вĕсене юсаса пăхса усрамалли плана тултармалла. Çулйĕр организацийĕсем строительство материалĕсем хатĕрлемелли плана тултарманнине тата чылай районсенче çулйĕрсене япăхтарнине шута илсен, уйăхлăхра пурнăçа кĕртмелли ĕçсен хисепĕ татăх та пысăкланать.

Çулйĕр уйăхлăхĕнче тумалли ĕçсене пĕтĕмĕшпех тата лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртес тесен, çулйĕр организацийĕсем тата партипе совет органĕсем çав ĕçе большевикла ертсе пыни кирлĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çулйĕр строительстви планне кашни колхозпа ялсовет патне çитермелле, çав енĕпе ĕçлеме ответлă çынсем уйăрмалла. Çулйĕр управлени руководителĕсен çулсем çинче ĕçе тивĕçлипе организацилес пулать. Рабочисем валли тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памалла, ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Уйăхлăх пуçланнăранпа пилĕк кун иртрĕ ĕнтĕ. Анчах та чылай районсенчи партипе совет организацийĕсем тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман-ха. Пуриншĕн те паллă, строительство планне ăнăçлăн тултарассине чи малтанах ĕç вăйĕ татса парать. Апла пулин те, чылай районсенче çулйĕр строительствине ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ. Сăмах, Ишлей районĕнчен куллен çуранисем 120 çын ĕçлес вырăнне июнĕн 23-мĕшĕнче 92 çын çеç ĕçленĕ. Комсомольски районра кӳ ĕç татах та начартарах. Кӳ районран çуран 180 çын вырăнне 20 çын, лашапа 80 çын вырăнне 14 çын çеç ĕçлеççĕ. Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Елчĕк районĕсем те нумай мала кайман.

Çулйĕр строительствинче ĕçе организацилес тĕлĕшпе те мĕн кирлине шурне те туса çитермен-ха. Ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç çителĕксĕр, техника тĕлĕшĕнчен тивĕçлипе пулăшни çук.

Çулйĕр строительстви планне ăнăçлăн тултарасси, çулйĕрсене лайăх пăхса усрасси—куллен тумалли ответлă ĕç. Çулйĕрсем начар пулни промышленность предприятийĕсене те, колхозсемпе совхозсене те сахал мар чăрмав кӳрет. Çавăнпа та пирĕн çулйĕрсене яланах лайăх тытмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВЛĂ СВОДКĂН ВĔÇĔ

СЕЛО, ЛОСВИДА ятлă чугун çул станцийĕсем. БЕШЕНКОВИЧИРЕН хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ВИТЕБСК хулипе ЛЕПЕЛЬ хули хушшинчи шоссе çулне татнă.

ВИТЕБСК хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаппах ăнăçлă наступлени туса пынă, Витебск облаçĕнчи район центрне СЕННО хулине тата БОГУШЕВСК хулине [illegible] чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, [illegible] ытти 300 пункта ытла йышăннă. Вĕл шутра — БАТРАКИ, БИЛЕВО-СОКОЛЬНИКИ, ПОДБЕРЕЗЬЕ, ПРУДНИКИ, УЗВАРЦЫ, РУДАКОВСКИЕ, КАНЬШИ, НОВОСЕЛКИ, ГНЕЗДИЛОВИЧИ, ДУБРОВО, БЕРЕШЕВО, КАРПОВИЧИ, НЕРЕЙША, ЯНОВО, МОГИЛЕВКА ятлă ялсем тата КРЕСТЬЯНКА ятлă чугун çул станцийĕ. ВИТЕБСК хулинчен кăнтăртарахра наступлени туса пыракан çарсем ГНЕЗДИЛОВИЧИ районĕнче ВИТЕБСК хулипе ЛЕПЕЛЬ хули хушшинчи чугун çула тата ВИТЕБСК хулинчен хĕвеланăçнелле наступлени туса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ.

Çапла ĕнтĕ, çак наступленипе пирĕн çарсем ВИТЕБСК районĕнче нимĕçсен пилĕк дивизине тăшман группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

Пирĕн çарсем ВИТЕБСК хулине вăйпа кĕрсе кайнă, хулара вĕсем тăшманпа урам çапăçăвĕсем çапăçаççĕ.

ОРША хули енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ. Вĕл шутра — БАБИНОВИЧИ, ИВАНЬКОВО, ЗАОЗЕРЬЕ, БОЛЬШАЯ БАБИНА, МАЛАЯ БАБИНА, ОРЕХИ, ВЫДРИЦА, СТУПАНИ, ГОЛЯЦИ, МОРДАШОВО, ТЕОЛИН ятлă ялсем тата ОРША хулинчен 14 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре вырнаçнă ХЛЮСТИНО ятлă чугун çул станцийĕ.

МОГИЛЕВ хули енче пирĕн çарсем [illegible] наступлени вăйлатса пырса, Могилев облаçĕнчи район центрне ЧАУСЫ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта йышăннă. Вĕл шутра — УГЛЫ, ЖДАНОВИЧИ, БОЛЬШОЕ БУШКОВО, МАЛОЕ БУШКОВО, КИРКОРЫ, СУХАРИ, БАСЬКОВИЧИ, ТЕМРИВИЧИ, БОРДИНИЧИ, ЗАРЕЧЬЕ ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ЖЛОБИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра наступлени туса, [illegible] тăшман оборонине çĕмĕрсе кĕнĕ [illegible] БОБРУЙСК [illegible] 30 километр таран [illegible] ДРУТЬ шывĕ урлă [illegible] 80 километр таран [illegible] РОГАЧЕВ хулинчен [illegible] 12 километр [illegible] 100 пункта [illegible] — СТАЙКИ, ДУБЦЫ, РЕКТА (РОГАЧЕВ хулинчен 23 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ОЗЕРАНЕ, ДЯДОВЩИНА, БОЛЬШАЯ КОНОПЛИЦА, ВЕРИЧЕВ, ЗАПОЛЬЕ, КНЫШЕВИЧИ, МЫШЕВИЧИ (ПАРИЧИ хулинчен 8 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), ТУМАРОВКА, ЗАБОЛОТЬЕ, КОВЧИЦЫ, ПЕРВЫЕ, БАРАНИЙ РОГ, КРУНИ, ЧЕРНЫЕ БРОДЫ, ПРОТАСЫ, МОИСЕЕВНА, ПРОСЛИЩЕ, ГРАБЬЕ, МУШИЧИ ятлă ялсем тата МОШНА ятлă чугун çул станцийĕ.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн çарсем БОБРУЙСК хулипе ЛУНИНЕЦ хули хушшинчи чугун çула татнă.

ОНЕГА кÿлĕпе ЛАДОГА кÿлли хушшинче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, [illegible] наступлени туса пынă [illegible] ТАШКЕНИЦЫ, УСТЬЕ, РЕЧНАЯ, СЕЛЬГА, САМБАТУКСА, ПИПИЛИЦА, САРМЯГИ, ОБЖА ятлă ялсене те туртса илнĕ.

ОНЕГА кÿлĕн [illegible] КУМСА шывĕ урлă [illegible] МЕДВЕЖЬЕГОРСК хулинчен 15 километр [illegible] ШАРВАРЫ, ПАДУН [illegible] МУРМАНСК чугун çулĕ çинчи ПРЕДМЕДГОРСКИЙ, ПЕРЕГУБА [illegible] туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Июнĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 44 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 48 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ПОЛОЦК ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ОБОЛЬ СТАНЦИЙĔ ТАПАННИ

Пирĕн инçене вĕçекен авиаци июнĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Полоцк чугун çул узелĕпе Оболь станцине тапаннă. Полоцк чугун çул узелне тапаннă чухне унта тăшман çарĕсемпе вăрçă хатĕрĕсем нумай пулнă. Пирĕн летчиксем, чугун çул узелĕн территорийне сутатакан бомбăсемпе çутатса ярса, узелти поездсем тата складсемпе сооруженисем çине тĕллесе бомбăсем пăрахнă. Тавар станцийĕнче 10 тĕлте пушар тухнă, вĕсенчен вицĕ пушарĕ питĕ вăйлă пулнă. Вут темиçе эшелона тата станцири çуртйĕрсене хыпса илнĕ. Чугун çул узелĕн хĕвелтухăç пайĕнче питĕ вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн авиаци йышлăн вĕçсе пырса çапнипе Оболь чугун çул станцийĕнче темиçе чугун çул эшелонĕ çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ е çунса кайнă. Станци территорийĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

„Заря“ колхоз çĕртме туса пĕтернĕ

ШАХАСАН. Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхоз членĕсем (колхоз председателĕ Зверев юлташ), Хĕрлĕ Çар Ленинград фронтĕнче çĕнтерÿсем тунипе хавхаланса, ирхи çĕртме тунă çĕрте тăтăшах нормăна тултарса пычĕç. Çавна пула колхоз ирхи çĕртме сухине 7 ĕçкунĕ хушшинче ăнăçлăн туса çитерчĕ, июнĕн 17-мĕшĕ тĕлне çĕртме сухи тумалли плана 100 процентпа тултарнă.

Çĕнĕ Мами ялсоветĕнчи колхозсенче те ирхи çĕртме сухине тăвас ĕç ăнăçлăн пырать. «Красный партизан» колхоз (председателĕ коммунист И. Васильев) ирхи çĕртме сухине 85 гектар сухаланă, çĕртме тумалли вырăна 9655 лав тислĕк кăларнă. Çĕртме тунă çĕрте Ф. Алексеев, В. Тихонов, И. Ильина юлташсем ĕç нормисене яланах 200—225 процент тултарса пыраççĕ. Çĕртме сухине «Активист» колхоз 52 гектар, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 67 гектар, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 48 гектар тунă. Çĕртме тумалли вырăнсене 1.500—2.000-шер лав тислĕк кăларнă.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Чăваш республикинчи колхозсенче çĕртме тăвасси çинчен» йышăннă постановление колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнлантарма колхозсене уполномоченнăйсем янă. Колхозсенче çĕртме тăвас ĕçе ăнăçлăн ирттерес тĕлĕшпе массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн туса пыраççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Канма вăхăт мар

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Асăмçырминчи «Коминтерн» колхоз членĕсем июнĕн 17-мĕшĕнче 13 гектар люцерна, 2 гектар клевер çулса пĕтерчĕç. Халĕ вĕсем утта капана хываççĕ.

Колхозра пĕтĕмпе виçĕ бригада. Вĕсем пурте пĕр-пĕринчен юлмасăр ăмăртса ĕçлеççĕ. Çавна май кунта кашни колхозниках ĕçре нормăна ирттерсе тултарать.

Кун пек ĕçчен колхозсем районра татах та пур. Вĕсем те утă çулас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Анчах та хăшпĕр колхозсем вара утă çулма тухма пачах хатĕр мар. Сăмахран, «Искра» колхозăн (председателĕ М. Быков) кăçал 128 гектар утă çулмалла. Çулмалли сахал мар. Апла пулин те, колхоз паянхи куна утă çулма тухма хатĕрленсе çитмен. Çавăсене А. Волков тимĕрçĕ патне легсе панă та вĕсем çаплипех выртаççĕ. 200 лапатка хатĕрлес вырăнне 50 кăна хатĕрленĕ. Колхозăн косилка та пур.

— Эпир кăçал косилкăпа çулмастпăр, çавăнпа ăна юсамастпăр та,—тет колхоз председателĕ Быков юлташ.

Çавăн пекех уборкăна хатĕрленес ĕç те япăх пырать. Колхоз ĕç планĕ тумансха. Бригадăсене звеносем тăрăх уйăрман. 40 урапа хатĕрлес вырăнне 24 урапа кăна хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе И. Андреевпа Л. Григорьев платниксем вăраххăн ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз та (председателĕ А. Игнатьев) утă çулма тухма хатĕр мар. Халĕ çависене те туптама тытăнман. Вĕсем ирпнĕ çулта та утă çулас ĕçе хакламан. Çавна пула вĕсен 30 лава яхăн утă çĕрсе кайнă. Çав йăнăшсене вĕсен кăçал шута илмелле.

Х. ЛИСИН,
Б. ШОРНИКОВ.

Клевер çулса пуçтарчĕç

СĔНТĔР, июнĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). «Колос» тата «Çĕнĕ çул» колхозсем кăçал утă çулма лайăх хатĕрленсе тухрĕç. Çавасемпе лапаткасене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне «Колос» колхоз 8 гектар, «Çĕнĕ çул» колхоз 5 гектар утăлăх акнă клевера çулса пуçтарчĕç. Ĕçлекенсем валли колхозра çак кунсенчех столовăй уçăлать. «Колос» колхозра 130 ача вырнаçмалăх ача яслипе площадка уçаççĕ.

Утă çулнипе пĕрлех «Çĕнĕ çул» колхоз уборкăна та лайăх хатĕрленет. Колхоз тимĕрçи Паулин юлташ паянхи куна 3 жнейка юсанă. Колхозниксен пĕр пайĕ силос хывнă çĕрте ĕçлет. Халĕ 25 тонна хывнă.

М. КАРПОВ.

ВКП(б) Шупашкар организаци активĕн пухăвĕ

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) Обкомĕн XIX-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик хулари промышленность государствăн 1943 çулхи планне 103 процент тултарнине палăртрĕ. Анчах та тунă çитĕнÿсене 1944 çулта çирĕплетсе малалла ÿстерсмен. Пилĕк уйăхри плана государство промышленноçĕн предприятийĕсем 89,4 процент, облаçа пăхăнса тăракан промышленность 94,7 процент, хулари вырăнти промышленность 92,2 процент, промысла артелĕсем 135,9 процент тултарнă.

Чылай предприятисенчи хуçалăх тата парти руководителĕсем производствăри ситменлĕхсене пĕтересшĕн кĕрешес ĕçе сÿрĕклетнĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес, рабочисем валли тухăçлăн ĕçлеме условисем туса парас, социализмлă ăмăртăва сарса пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чылай предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисем предприятисен производство ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе пыраççĕ, массăсем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен, партире тăман активпа сахал ĕçлеççĕ.

Малалла докладчик электростанци ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклет. Чылай предприятисем—пир-авăр тĕртекен фабрика, тир-сăран комбиначĕ, Ленин ячĕпе тăракан фабрика—хăйсен планне тата фронт заказĕсене, электроэнерги çителĕксĕр пулнă пирки, тултарайман. электростанцисене хĕлле хатĕрлеме тытăнман-ха.

Хула территорийĕнче кĕрекен колхозсен, предприятисемпе учрежденисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕсем çинчен каланă чухне, Романова юлташ вĕсем çуракине ăнăçлăн ирттернине палăртрĕ. Подсобнăй хуçалăхсен çĕр лаптăкĕ 300 гектар ытла ÿснĕ. Уйрăм çынсем акакан çĕр лаптăкĕн хисепĕ те чылаях ÿснĕ. Анчах хула территорине кĕрекен колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çине пачах та çителĕксĕр çаварăнса пăхаççĕ-ха.

Романова юлташăн доклачĕ тăрăх пренире партбюро секретарĕсем Полукаров, Брикер, ОРС начальникĕ Трофимов, Атăл леш енчи торфпредприятийĕн директорĕ Шебеко, водосвет директорĕ Варфоломеев, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин, Атăл леш енчи электростанцин директорĕ Баймуратов, пир-авăр тĕртекен фабрика директорĕ Наумова, ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Трусова, ОРС начальникĕ Каплин юлташсем тухса калаçрĕç.

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ, ВКП(б) Обкомĕн XIX-мĕш пленумĕн решенийĕсене ырласа, вĕсене пурнăçа кĕртме практикăллă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Пухура ĕçне ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логвин, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташсем хутшăнчĕç.

Райкомол работникĕсем пулман çĕрте

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII пленумĕ комсомолăн ялсенчи организацийĕсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатма татăклă кăтартусем пачĕ. Пленум иртнĕренпе икĕ уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Анчах комсомолăн Ишлей районĕнчи чылай пуçламĕш организацийĕсем пленум решенине пурнăçа кĕртессипе нимĕн те тумаççĕ-ха.

Комсомол райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сыпайкасси ялсоветĕнчи «Труд» тата «Ыраш» колхозсенче комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем пур. Мĕнле организацисем-ха вĕсем? «Труд» колхозри пуçламĕш организацинче 5 комсомолец шутланать. Вĕсенчен иккĕшĕн комсомол билечĕсем çук. Комсомолка А. Сидарова комсомол билетне 1941 çулхи август уйăхĕнче çухатнă. Ун çинчен паянхи куна çитсе те сÿтсе-явман. С. Кудряшов комсомол билетне çухатни çинчен райкомра та пĕлеççĕ. Çапах ĕçе февраль уйăхĕнченпе пăхса тухмаççĕ.

Комсомол организацийĕ питех те начар ĕçлет. Пухусем ирттермеççĕ, комсомолецсем темиçешер уйăх членски укçи тÿлемен. Çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пымаççĕ. 1941 çултанпа пĕр çамрăка кăна комсомол ретне илнĕ. Колхозра хастарлă çамрăксем нумай, анчах вĕсене комсомола илес ыйтупа никам та ĕçлемест. Комсомолецсен ĕç дисциплини япăх.

Райкомол работникĕсем колхозсенчи комсомол организацийĕсенче сайра-хутра кăна пулаççĕ. Сыпайкасси ялсоветĕнче вĕсем 1943 çулхи апрель уйăхĕнчен вара пулман.

Комсомол организацийĕсен секретарĕсем пулса, пуринчен ытла, çамрăксем ĕçлеççĕ. Çавăнпа та вĕсене вăхăтра кирлĕ кăтартусем парса, пулăшса пымалла. Анчах ВЛКСМ райкомĕпе унăн секретарĕсем Кузнецовпа Бондарев юлташсем комсомолăн çак организацийĕсене тивĕçлĕ пулăшу парасшăн тăрăшмаççĕ.

И. Г.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 24-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур хули патĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман вăйлă хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем майĕпен малалла куçса пыраççĕ, хальхи вăхăтра вĕсем çыран хĕрринче, крепоçăн икĕ енче, крепость çывăхĕнчех тăраççĕ.

Карантан хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă. Кан хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн пăртак малалла кайнă. Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн вăрçă карапĕсем тăшман çарĕсемпе танкĕсене персе тăнă.

Июнĕн 23-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ пуринчен ытла тăшманăн Парижран хĕвеланăçнелле тата Кăнтăр Францирен çурçĕрелле куçарма хăтланнă çĕнĕ вăйĕсене хирĕç кĕрешнĕ. Луара шывĕваррипе Уаза шывĕ хушшинчи участокра тĕп чугун çулсемпе шоссе çулĕсем çине тата аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсемпе пенĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрлапа каçхине союзниксен авиацийĕ тăшманăн Францири тĕрлĕ объекчĕсене тапаннă.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 24-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Шербура çавăрса илнĕ унка майĕпен хĕссе пыраççĕ. Тăшман çав тери хаяррăн хирĕç тăрса çапăçать пулин те, пирĕн çарсем Шербур оборонин кашни сыпăкне пĕтерсе пыраççĕ. Фронтăн вăтаçĕрти пайĕнче (вăл çур ункă пек выртать) пирĕн çарсем хула варринчен икĕ мильăра тăраççĕ.

Орн шывĕн секторĕнче пехотăпа танксем хаяррăн çапăçнă хыççăн Сент-Снорин ятлă яла ирĕкç кăларнă. Тăшманăн темиçе танкне юрăхсăра кăларнă.

Июнĕн 24-мĕшĕнче ирхине ирех çырана хÿтĕлекен çăмăл карапсем тăшманăн пысăках мар çичĕ суднин караванне пÿлсе илнĕ. Çав каравана хуралласа пынă пулнă, вăл Шербуртан хĕвеланăçнелле кайма хăтланнă. Тăшманăн икĕ карапне пĕтерсе тăкнă, унсăр пуçне тата 3 карапне шыва путарнă пулмалла. Ракетăллă самолетсем тата истребитель-бомбардировщиксем Сен-Мало çывăхĕнче тăшманăн пиншер тонна таякан виçĕ суднине сиенленĕ, пĕрне вут тивертсе янă.

Пирĕн самолетсем тăшмана çапăçу районне çар хатĕрĕсемпе çĕнĕ вăйсем илсе пыма кансĕрленĕ.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 25-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Шербур хули хĕррисенче тăраççĕ, татăклă штурм пуçланчĕ. Хулана хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енчен çавăрса илнĕ 10 миля тăршшĕ фронтра пирĕн çарсем малалла куçнă, халĕ вĕсем тинĕсрен виçĕ мильăра тăраççĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăрать пулин те, ăна пĕр чарăнмасăр хĕссе пыракан союзниксен çарĕсем унăн оборонăллă укреплениĕсене çыран оборонин ансăр тăрăхĕнче пур çĕрте те çĕнтерсе пыраççĕ.

Ытти участоксенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ, çав çапăçусем фронт линине улăштарманпа пĕрех.

Июнĕн 24-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçхине пирĕн самолетсен пысăк соединенийĕсем сывлăшра çапăçнă, вĕсем пуринчен ытла тăшман çыхăнăвĕсене атакăланă.

Анже районĕнчи аэродромсенче тата сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 55 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 22-мĕшĕнче союзниксен пĕр пин самолечĕ ытла нимĕçсен Шербурти оборона сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав самолетсем нимĕçсен позицийĕсем çине союзниксен çарĕсен малти чаçĕсем тăракан вырăнтан 150—900 метртра кăна бомбăсем пăрахнă.

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Гамбург хулине тапаннă.

Паян йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Плоешти хулинчи тата Джурджу хулинчи (Румыни) нефть тасатакан заводсем çине тата Ниш хулинчи (Югослави) сортировка станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă.

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ ФРАНЦИН КĂНТĂР ПАЙĔНЧИ ГЕСТАПО НАЧАЛЬНИКНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, французсен Лондонри ушкăнĕсем çакна пĕлнĕ: француз патриочĕсем Францин кăнтăр пайĕнчи гестапо начальникне Крейсслера вĕлернĕ. Крейсслер 1940 çулта Виши хулинче гестапо штабне тунă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнчи лару-тăру кăшт кăна улшăнчĕ. Тăшман çаплах хытă хирĕç тăрать, вăл халĕ Тразимен кÿллинчен хĕвелтухăçнерехри тата хĕвеланăçнерехри малтанах хатĕрлесе хунă позицисене йышăнса тăрать. Италин хĕвеланăç çыранĕсенче пиллĕкмĕш арми чаçĕсем çаплах малалла куçса пынă, халĕ вĕсем тинĕс хĕрринчи Фаллоник хулинчен инçех те мар тăраççĕ.

Истребитель-бомбардировщиксемпе çăмăл бомбардировщиксем Италин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи тата Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи ахаль çулсене, чугун çулсене тата кĕперсене тапаннă.

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Италири çарĕсем фронтăн пур участокĕнче те малалла куçнă. Фаллоника хулине туртса илнĕ. Фронтăн ку участокĕнче малти отрядсем Масса хули патне пымалли вырăнсен районне йышăннă.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем, Тразимен кÿллинчен хĕвелтухăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре наступлени туса пырса, Сартеано хулине йышăннă. Перуджа хулинчен çурçĕртерехре тăшман вăйлă хирĕç тăрать.

Енер йывăр бомбардировщиксем Плоешти хули районĕнче нефть промышленноçĕн предприятийĕсене, Крайов хулинчи паровозсем юсакан депова тата Пьятра хулинчи чугун çула (Румыни) тапаннă. Йывăр бомбардировщиксене хÿтĕлесе пынă истребительсем Плоешти хулипе Бухарест хули районĕ çийĕнче активлă операцисем туса ирттернĕ.

Истребитель-бомбардировщиксем тăшман суднисемпе ытти вăрçă объекчĕсене тапаннă. Çав операцисем вăхăтĕнче тăшманăн 26 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 15 самолет пĕтнĕ.

ИТАЛИ ПАТРИОЧĔСЕМ ОККУПАНТСЕМПЕ ÇАПĂÇНИ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Анкона хули районĕнче каялла чакакан нимĕç çарĕсемпе Итали партизанĕсен отрячĕсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Çавăн пекех Итали патриочĕсем нимĕçсене Сьена, Ареццо тата Флоренци хулисен районĕнче те тапănаççĕ. Болонья хули районĕнче темиçе пин партизан оккупантсемпе çапăçма хатĕр тăраççĕ. Çурçĕр Италире, уйрăмах Генуя хулипе Турин хулинче, промышленность предприятийĕсенче забастовкăсем пыраççĕ. Милан хулинчи предприятисене фашистсен милицийĕн тата эсэсовецсен пысăк отрячĕсем сыхлаççĕ. Нимĕçсем оккупациленĕ Специя портĕнче тăракан Итали карапĕсен экипажĕсем хушшинче хумханусем пуçланса кайнă.

ГЕРМАНИН «САМОЛЕТ-СНАРЯЧĔСЕНЕ» СЫВЛĂШРА ПĔТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германин «самолет-снарячĕсене» нумайĕшне Англин кăнтăр пайĕ тĕлĕнче пĕтереççĕ, вĕсене Англие сиен кÿме ĕлкĕриччĕнех пĕтерсе тăкаççĕ. Çав «самолет-снарядсене» сывлăшра персе çĕмĕреççĕ. Хăш чухне вĕсем уçă вырăна анса лараççĕ те пĕр сиен тумасăрах çурăлса каяççĕ. Июнĕн 20-мĕшĕнче ирхине ирех çĕрлехи истребительсем тăватă «самолет-снаряда» пĕтерсе тăкнă. Пĕр «самолет-снаряд» сывлăшри чăрмав çине пырса тăрăннă та çĕре ÿкнĕ. Вăл сирпĕнсе кайнипе таврари çуртсене чылай пысăк сиен тунă, анчах çынсем вилни пулман.

ГЕРМАНИ СУДНИСЕМ ХУРА ТИНĔСРЕН ЭГЕЙ ТИНĔСНЕ КУÇНĂ ПИРКИ

АНКАРА, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Турци влаçĕсем малашне нимĕçсен «Мангейм» тата «Эмс» йышши суднисене çар карапĕсем тесе шутлама йышăннă, вĕсене пролив урлă ямалла мар тунă. Нимĕçсен ытти йышши суту-илÿ суднисене пролив урлă каçнă чух тĕплĕн пăхмалла тунă.

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин «Кассель» ятлă судни, суту-илÿ судни пек пулса, пролив урлă каçма хăтланнă, анчах ăна Хура тинĕсе каялла таварса янă.

«Кассель» — çар-транспорт судни, вăл 800 тонна таять, унăн корпусне броньăпа витнĕ. Анкарари радио пĕлтернĕ тăрăх, çав судно çинче йывăр пулеметсем лартмалли темиçе вырăн туса хунă. Трюмра пĕр тупă пулнă, ăна йывăр пулеметсем лартмалли вырăна вырнаçтарса лартма пулать. Судно çинче 65 ещĕк снаряд тупнă. «Кассель» суднăна хуралта çÿреме тата десант илсе çÿреме тунă.

ШВЕЦИЕ ТАРАКАН ФИНСЕН ЙЫШЕ ÜССЕХ ПЫРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Дагенс нюхетер» хаçачĕ çапла пĕлтерет: юлашки кунсенче Швецие тарса кайнă çынсен тата финн çарĕнчен тарнă салтаксен шучĕ самаях ÿссе кайрĕ. Финсем пинĕ-пинĕпе паромсемпе луткасем çине ларса Швецие пыраççĕ. Тарса пынă çынсем хушшинче финн салтакĕсем нумай. Нумайĕшĕ Швецие хăйсен çемьисене илсех куçса пынă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ШВЕЦИ ÇĔРĔ ÇИНЕ АНСА ЛАРНА

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин оборона штабĕ çапла пĕлтерет: «Июнĕн 20-мĕшĕнче ирхине американецсен йышлă бомбардировщикĕсем Швеци территорийĕнчи Сконе провинцине вĕçсе кĕнĕ. 10 сехет те 30 минут çитиччен Швеци территорине 21 самолет анса ларнă е унта çĕмĕрĕлсе кайнă. Америка самолечĕсем вĕçсе кĕнĕ пирки Швецин сывлăшран тапăннинчен хÿтĕлекен вăйĕсем хытă ĕçленĕ».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен кăнтăр-хĕвелтухăç Азири çарĕсен командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Китай тата Америка çарĕсен командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Китай тата Америка çарĕсем çурçĕр Бирмăри пысăк чугун çул узелĕ пулса тăракан Моргаунг хулине кĕнĕ.

Хулара хаяр çапăçусем пыраççĕ.

ВАШИНГТОН, июнĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Мариан утравĕсен районĕнчи операцисем вăхăтĕнче Американ хĕçпăшаллă вăйĕсем Японин 44 суднине шыва путарнă, 47 суднине сиенленĕ. Японецсен 638 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Американецсен 4 судно тата 98 самолет пĕтнĕ.

Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарни çинчен Хэлл тата Стимсонпа Дэвис калани

ВАШИНГТОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарнă пирки Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл пресс-конференцире çапла каланă:

«Нацистсем Совет Союзне тискеррĕн тапăннине эпир каллех паллă тăватпăр. Совет çарĕ иртнĕ çулталăк хушшинче темиçе хут çав тери чаплă наступлени турĕ, çав наступленисенче калама çук пысăк çитĕнÿсем туни нацистсене Совет Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕн пысăкрах пайĕнчен тухса каймалла туса хучĕ. Европăна ирĕке кăларассишĕн малашне пулас çапăçусенче совет çарĕсем хăйсен калама çук чаплă наступленине малалла туса пырĕç, кун пирки никам та иккĕленме пултараймасть».

ВАШИНГТОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министрĕ Стимсон пресс-конференцире Хĕрлĕ Çарăн çав тери чаплă искусствине питĕ пысăка хурса хакланă. Вăл çапла каланă: союзниксен çитес çĕнтерĕвĕшĕн Совет Союзĕ питĕ нумай вăй хурса çапăçрĕ. Корреспондентсем Гитлер Совет Союзне тапăннин итогĕсем çинчен каланине ăнлантарса пама ыйтнă. Стимсон çапла каланă: Гитлер Российăна тапăнма шут тытни вăрçа тепĕр майлă çавăрса яракан тĕп тапхăрсенчен пĕри пулчĕ, «Гитлер тапăннине хирĕç вырăссем панă ответ тата вĕсем çарсене ертсе пырас ĕçре кăтартнă чаплă искусство пĕтĕм вăрçăн чи паха уйрăмлăхĕсем пулса тăраççĕ. Çак факторсем тăшмана çĕнтерес ĕçе питĕ нумай çăмăллатаççĕ, союзниксем çĕнтересси халь çывхарса килет».

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис июнĕн 21-мĕшĕнче Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи виçĕ çул тултарнă май Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар информаци бюровĕ Европа валли панă радиопередачăра çапла каланă:

«Виçĕ çул хушши совет халăхĕпе унăн руководителĕсем хăйсен позицийĕсене çав тери чăтăмлă пулса çирĕппĕн хăйсен аллинче тытса тăчĕç. Вĕсем пĕтĕм тĕнчери пĕрлешÿллĕ нацисене хăйсен ресурсĕсене пухма тата тăшмана çапса аркатмалли плансем тума май пачĕç, çав плансем паян кирлĕ результатсем параççĕ, кашнин ирĕклĕхне хăратса тăнă фашистла агресие пĕтерсе тăкма пулăшаççĕ».

Тĕнчене çаратакан фашистла вăрă-хурахсене аркатса тăкасси, тенĕ малалла Дэвис, çак кунтан пуçласа вăхăт ыйтăвĕ çеç пулса тăчĕ. Эпир çĕнтерес ĕçе, тĕнчере йĕрке тăвас ĕçе, пĕтĕм тĕнчере ĕлĕкхинчен лайăхрах мир тăвас ĕçе пирĕн союзник Совет Союзĕ калама çук пысăк та паттăр вклад хывнине эпир кунта, Пĕрлешÿллĕ Штатсенче, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çынсемпе пĕрле савăнса саламлатпăр. Этемлĕхе малалла ÿстерес ĕçе Совет Союзĕнчен пысăкрах, лайăхрах вклад хывма урăх нимĕнле халăх та пултарайман пулĕччĕ. Çавăнпа эпир çак кун аслă Совет Союзне, унăн çарне, флотне, халăхне, правительствине тата аслă çулпуçне Сталин Маршала саламлатпăр».

СОВЕТ СОЮЗĔН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇИ 3 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ МАЙ США-ра МИТИНГСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 22-мĕшĕнче Нью-Йоркра Мэдиссон-сквер-гарденра Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи 3 çул тултарнă май массăллă митинг пулса иртнĕ. Митинга Совет Союзне пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет пухнă. Митингра 18.000 çын пулнă. Унта паллă деятельсем сăмах тухса каланă: ЮНРРА-н генеральнăй директорĕ Лимэн, Совет Союз ĕçĕсен поверенăйĕ Капустин, генерал Бессон, сенатор Пеппер, автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн председателĕ Томас, механиксен профсоюзĕн вице-председателĕ Ньюмэн, Нью-Йорк мэрĕ Ла Гардиа тата ыттисем те. Вĕсем Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн кĕрешÿне пысăка хурса хакланă. Совет Союзĕпе Америка туслăхне малалла вăйлатса яма чĕннĕ. Митингри халăх вĕсен сăмахĕсене хавасланса хапăл туса йышăннă.

Лимэнпа Пеппер каланине радио тăрăх панă.

Совет Союзне пулăшу парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет çапла пĕлтерет: Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи 3 çул тултарнă ятпа США-ра çавăн пек массăллă митингсем сахалтан та 30 хулара пулса иртнĕ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Совет Союзĕн Мексикăри чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне К. А. Уманские çав вăхăтрах Совет Союзĕн Коста-Рикăри чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма лартнă.

Ĕçсыхни депутачĕсен Шупашкар хули совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

1944 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен çуртĕнче (Карл Маркс урамĕ, 11) ĕçсыхни депутачĕсен Шупашкар хули совечĕн 25-мĕш сессийĕ уçăлать.

Сесси çак ыйтăва пăхса тухать: «Хулана лайăхлатса илемлетесси çинчен» (докладчик — Горсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене туса тăракан П. И. Аникин юлташ).

Ĕçсыхни депутачĕсен Шупашкар хули совечĕн депутачĕсем сессие хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Ĕçсыхни депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн Исполкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех «ПОД ЗВУКИ ДОМБР» ятлă музыкăллă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00218 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 14.400 экз.